К84.09(=Чув)
К56
Ч-40224

Лидия Ковалюк



# ҪУРХИ ВӐЙ

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

⊗ Çак кĕнекене кăларма пулăшнăшăн тăван ялĕмри агрофирмăна тата унăн ертӳçине Алексей Григорьевич Хитрова чĕререн тав тăватăп.

# Автор çинчен

**Лидия Алексеевна КОВАЛЮК** (Антипова). Патăрьел районĕнчи Алманчă ялĕнче çуралнă. Вăтам шкулта вĕреннĕ. Чăваш Патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Ачасене чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ, комсомолта ĕçленĕ, çамрăксен общежитийĕнче воспитатель пулнă. Хальхи вăхăтра республикăри кĕнеке юратакансен обществине ертсе пырать. Лидия Алексеевна —Раççей Журналистсен Союзĕн членĕ.

Чи пирвайхи сăввисем стена хаçатĕнче пичетленнĕ, каярахпа «Авангард» хаçатра кун çути курнă.

«Ырă кун», «Тавах, ачам» кĕнекесен авторĕ. Унăн калавĕсем шкул программине те кĕнĕ. «Тăван Атăл», «Ялав» тата ача-пăча журналĕсенче, хаçачĕсенче тухнă.

Ч-40224

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

К84.09(=Чув)
К56



*Лидия Алексеевна*

# КОВАЛЮК

**Патӑрьел ялӗ, «Авангард» хаҫат редакцийӗ.**

# Манса кайман сана, Алманчă!

Эп çуралнă ял Алманчă
Сăрт çине вырнаçнăскер,
те мана пачах та манчĕ?
Тĕрĕсне пĕлместĕп-çке!

Сулхăнне чĕнет каç-каçăн
Ял тулли лаштра йăмра.
Ман çинчен те шухăшлаççĕ
Йывăççем çак вăхăтра.

Шăнкăртамăн* янăравлă
Юхăмне итле-итле
иртнĕ вăхăтăн пит шавлă
Пурнăçне курас килет.

Çакăнта выляна-ӳснĕ
Пирĕн ӳсĕм — çĕн малаш.
Хурлăхне те пулĕ тӳснĕ
Килĕшӳллĕ тус-юлташ.

Эп çуралнă ял Алманчă
Сăрт çинчи илемлĕ ял,
Кăçарсам: эс патăн шанчăк,
Патăн тӳсĕмлĕ вăй-хал.

Темĕн чул маттур хĕр-каччă
Пил илсе сан шкулунта
Вăл малаш çулне пăхатчĕ,
Парăм пур сан умăнта.

Тен, йĕплет ял кахалĕ
Ман çинчен аса илсе.
«Вăл хула майри-çке халĕ?
Мĕн тăвать кунта килсе?»

Сӳтĕк ăс вăл ĕмĕрне те
Тĕк тăраймĕ, тупата!
...Тунсăх çулĕпе вĕçтертĕм
Эп, Алманчă сан пата!

* Шăнкăртам — çырма ячĕ.

# Чăваш çĕршывĕ

Чăваш çĕршывĕ — пирĕн кил,
вăл маншăн ĕмĕрех тăван.
Тăван çĕршыв пилленĕ кил
пире упранă ачаран.

Пире çуратнă çĕр аннен
ыр кăмăлне пула ялан
Эпир те ăшă çуркуннен
Сар хĕвелне манса кайман.

Сар хĕвеле юратнăран
Эпир ӳсетпĕр савăнса.
Кăвак тӳпемĕр хуралсан,
Эпир ҫӳретпĕр хурланса.

Кашни кил-йыш хĕвел сăнне
упрас пулсан ҫак тĕнчере,
Ҫын курмĕ вăрҫă пушарне,
телейлĕн тапĕ ик чĕре...

## Анне

Пире ĕҫчен пулма вĕрентрĕн
Ытарайми анне.
Эсех ăс-хакăла ҫĕнтерĕн:
«Юратăр ҫынсене!»

Пĕррехинче вилмех пуҫларăн,
Хавшарĕ сывлăху.
Пире куҫран, пăхса, мáнтарăн,
Эс паттăрлатрăн ху:

«Ан нăшáклăр,
Чунри хĕвелĕм —
Эсир-ҫке, ачасем.
Эсир пулсан ҫеҫ эп ҫемьеллĕ,
Эсир — ман ĕмĕтсем».

Вара каларӗ Валя йӑмӑк:
— Ан вил, анне, тӳссем!
Тӳссем!
Эп вӗренмесӗр тӑмӑп.
Кӗтсем кӑштах, кӗтсем.

Эп тухтӑр пулӑп.
Пур чиртен те
Сыватӑп эп сана...
Эп хамӑн йӑмӑка ӗнентӗм —
Халь тухтӑр вӑл, чӑнах!

Эп ҫеҫ нимех те ӗненеймерӗм,
Хам ҫӑтрӑм куҫҫуле:
«Ҫыравҫӑ эп пуласшӑн! — терӗм, —
Тӗпчем, ӗҫлем куллен:

Сан кунҫулу ҫинчен те ҫырӑп,
Юратнӑ сын — анне!
Ҫак ӗмӗте эп тытӑп ҫирӗп,
Пилле ял сӑвӑҫне!..»

Пире итлерӗн эс, аннеҫӗм,
Пиллерӗн сын пулма..
Хуллен, хуллен ҫулсем иртеҫҫӗ,
Асӑнмалли нумай.

«Анне» тесе пире ӗнеҫҫӗ
Халь хамӑр ачасем.
Пуласчӗ пирӗн те вӗсемшӗн
Юратнӑ аннесем.

# Хӗрӗме

(ирӗклӗ йӗркесем)

ИРИНӐНА

Пин-пин алӑллӑ пулсан
пин-пин аллӑмпа сана
ыталӑттӑм хавас.
Пин-пин чӗре тапас пулсан,
пин-пин чӗрем ӑшшипеле
телейлӗ ӗмӗр сунӑттӑм,
Анчах ӑшчик темле ҫунсан та
чӗре пӗрре ҫеҫ.
Мӗн тӑвас?

Тип йывӑҫ тымарне чӗртме те
пултарӑн эс!
Сив ҫумӑрӑн сив чаршавне
кӑвак хӗлхемлӗ куҫусем
шӑтарчӗҫ юратун сӳнми
кӑварӗпе, чӗкеҫӗм.
Юратӑва ҫеҫ пайлама
май ҫук, май ҫук.
Чӗре пӗрре ҫеҫ!
Мӗн тӑвас?

Тасалӑхна упрас тесе
эс янкӑр тӳпере шыран
юратнӑ ӑмӑрткайӑкна.

Туту кулать, туту чӗтрет
таса юратӑва курса
ҫӗн шанчӑк тупнӑран.

Чун аслӑ та ҫунатлӑ
пулсассӑн ҫеҫ ӑнланӑн, хӗрӗм:
ҫунатлӑ шанчӑк — эсӗ ху.
Пӗрре хавас, тепре салху
шухӑшсемпе ҫул шыраса
ӑнланӑн эс ӑраскална:
вӑл уҫӑ кӑмӑллӑ, чее.
Ӑҫтан килет-ши ку сӑлтав?
Калас-и? Хӑвӑнтан!
Чипер хӗрсен шӑпи — ик питлӗ.
Хуйха-суйха пайлас тесен,
чӗре пӗрре ҫеҫ! Мӗн тӑвас?
(ирӗклӗ йӗркесем — верлибр).

# Ачалӑх сасси

Курӑнатчӗ пӳртрен кантӑк витӗр
Эп вӗреннӗ шур хурӑнлӑ шкул.
Курӑнатчӗ хитрен ун пахчи те,
Пӑс хирсемлӗ вӑрман, аслӑ ҫул...

Шухӑша та илем ҫеҫ кӳретчӗҫ
Вӗҫсӗр-хӗрсӗр уйсем, кӳлӗсем.
Темӗн чухлӗ хӗр-тантӑш ҫӳретчӗ

Ял урамӗсенче хӗвӗшсе.

Эп «Патан кӳллине» те манмастӑп:
Ҫырларан таврӑнсан ушкӑнпа
Ҫакӑнта каннӑ эпӗр. Тунмастӑп,
Сӑвӑсем те ҫыраттӑм кунтах.

Ушкӑнпа сахал мар шухӑшланӑ
Ыр малашлӑх ҫинчен.
Ҫак сӑнсем.
Чӗрере вут чӗртсен мӗншӗн манӑр
Тахҫанхи туслӑха тантӑшсем.

Саламлатчӗ пек ҫеҫпӗл чечекӗ
Юр кайсан вӑрманта час-часах.
Ҫавӑнпа Аслӑ Ҫеҫпӗл хисепӗ
Ман ӑшра та пырать вӑйлансах.

Кам чунне ҫеҫ ҫунатлӑ туман-тӑр
Мишша Ҫеҫпӗл сӑвви ҫамрӑк чух?
Шухӑшне анлӑ хир, сӗм вӑрман та
Халь упрать-ҫке,
Ӑна манас ҫук.

Ҫавӑнпа пуль ачалӑх сӑвви те
Халь килет-ҫке аса, тусӑмсем.
Курӑнатчӗ пӳртрен кантӑк витӗр
Эп вӗреннӗ кив шкул, хурӑнсем.

# Астăвăм çырăвĕ

**Тамара Васильевна КУДРЯШОВАНА, ÇĔНĔ ШĂМĂРШĂ ХĔРНЕ**

Хĕр-тантăшăм!
Хутран-ситрен эп халь те
Эс — шăпчăк саслă.
Итлетĕп киленсе сан сассуна.
Ĕмĕрех çуталтăр
Сăну ман асăмра — телей сунам!

Чун ăшшине санра эп туйрăм лайăх,
Ыр канашу çăлатчĕ инкекрен.
Сан чӳречӳ сакки çинче саркайăк
Юрлатăр çур çитсессĕн ирсерен.

Çăлкуçĕ пек таса ыр кăмăлушăн
Тав тăвăп ĕмĕр-ĕмĕр эп сана.
Ăраскалун тивлечĕ пулĕ хушăн,
Çав тивлете эп хам та ăмсанам.

Сан чĕрӳнти пуян тĕнче нихçан та
Чухăнланмасть.
Вăл савăнăç парать
Çак самана çулне санпа, хĕр-тантăш,
Шăпа пӳрсен утса тухатпăрах.

Çул телейне çăлать тăванлăх, туслăх —
Кирлех-и кун пирки пит калаçма?
Шăл хăйракан тăшман чĕри — çур пуслăх,
Пĕлет-и вăл ырра сума сума?

Апла пулсан, çĕр хут, пин хут курсамчĕ
Эс çĕмĕрт çурăлса тăкăннине.
Ыр сунаканшăн! сӳнмĕ çутă шанчăк,
Вăл çутрĕ пирĕн ĕмĕт çăлтăрне.

## Парадокс

Ыр туйăмсем те «резервацире»
пулаççĕ тепĕр чух.
Пурне те шанакан чĕрен
нихçан та хӳтлĕх çук.

Усал-тĕсел хуçалансан тăрук
кăварланать чĕрем.
Çын тивлетне çухатнăран хăш чух
тухатăп «резервацирен».

Резерваци — уйрăм йăхсене уйăрса панă начар çĕр лаптăкĕ. Çав «лаптăкран» тухса çӳреме ирĕк çук.

# Тирек

—Юр ҫăвать, ав, юр ҫăвать! —
Тантăш савăнса калать.
—Юр? Ăҫтан вăл? Халь ҫулла,—тетĕп.
Пăхрăм эп тула —
Ҫаврăнать ҫеҫ ҫил-тăман.
Пӳлĕмре епле ларан!
Тухрăм эп... Алла тăсатăп —
Шурă пĕрчĕке тытатăп
Сaптаратăп — шывланмасть
Сивĕ мар, ӳте шăнтмасть.
Лĕпĕш пек вылять умра.
Савăк туйăм халь — чунра.
Тантăш шав кулать, йăлать:
—Юр ҫăвать!
Эх, юр ҫăвать.

# Хурăн

Хурăн эпĕ лартрăм
Пиччепе пĕрле.
Ир те каç шăварттăм,
Шыв ҫĕкле-ҫĕкле.
Пĕчĕкҫĕ ҫав хурăн —
Хулпуҫҫи таран
Ҫеҫчĕ пĕвĕ унăн —
Ҫӳллĕ халь манран.
Ун вулли шап-шурă,

Çулçисем çăра.
Кун пек хурăч урăх
Çук тен, таврара.
Сивĕ-и е шăрăх —
Уншăн ним те мар,
Çутă вăл, пит йăрăс,
Яланах япшар.

# Улмуççи

Улмуççи те манăн пур.
Çуркунне кăçал
Ларчĕ юр пек вăл шап-шур
Кур, улмаллă халь.
Улмине вăл ман валли
Уснă аялах:
«Кармашма çитмест алли,
Тачăр, — тет, — çапла».

# Манăн çăлтăр

Кăн-кăвак тӳпере каçсерен
Çăлтăрсем пинĕн-пинĕн çунаççĕ.
Шурăмпуç ерипен çĕкленсен
Шупкалса куçăмран çухалаççĕ.

«Çĕр çинче манăн çăлтăр пĕрре»
тейĕп санăн сăнна манаймасăр.
Санпала çамрăкланнă чĕре
таптăрах йĕксĕке пуç таймасăр.

Манăн çăлтăр ўксен ăнсăртран
Эпĕ туслăх мĕнне те пать манăп.
Эс манпа юнашар утнăран
Хăруш мар сăнсăр кун çил-тăманĕ.

x x x

Çут тĕнчере мана анчах
тен, маншăн çеç çуралнă эсĕ тĕнчере?
паран пек пурнăç ăшшине:
Сачпа пĕрле чухне час-час
манатăп пурнăç нушине:
тен, хамăр телее тупмах
пĕрлешрĕ ик чĕре?
Нихçан сўнми юратура
çамрăклăха упра-упра
куратпăр шартлама хĕллех
сурхи куна;
çапах та ĕмĕр иртиччен
эп сан тўлек куçусенче
шанми чечек пулса юлам-и
яланах?

# Тăван çĕршыв

Ман Тăван çĕршывăм — хамăр хирсенче-
текенсем чăтма çук кăмăла хуçассĕ.
Ман Тăван çĕршывăм — хамăр хирсенче:
Чухăн-и? Пуян-и? Пулмĕ вăл хуçасăр.

Хам йăхсем вăй илнĕ çĕршыва мансан,
эп кама-ши кирлĕ? Калама пĕлместĕп.
Эс, Тăван çĕршывăм, тухмăн ман асран:
сан пекки тек пур-ши? Пĕртте ĕненместĕп.

# Парсамччĕ сас

Вĕçес килет — çунатăм çук,
Йĕрес килет — тухмасть куççуль.
Эп тунсăх аваăрне путсах
вилетĕп пуль?
парсамччĕ сас!

Хуллен иртет ман вăтану
Хуллен иртет ман ютшăну.
Манран писсен те çав-çавах
юлать асаплă туртăну.

Çакна пĕлсех эп сан ятна
пăшăлтататăп ăшăмра.

Юратури чун асапне
Куратăп тĕкĕрти сăнра.

Эс, çамрăклăх, килен пĕрре!
Антив, эс вăйлă пулинех,
Çак юрату тĕнчи пĕрех
Çĕнтерчĕ манăн чĕрене.

# Пирĕн Инна

Пирĕн Инна пит маттур,
пит маттур та пит ĕçчен.
Савăнмалăх сăнĕ пур,
ыр сăмахĕ те чечен.

Вырăнне те пуçтарать,
чечексем те шăварать.
Ӳркенмест урай çума,
ӳркенмест çӳп-çап тăкма.

Лавккана та вăл чупать,
апат-çимĕç туянать.
Юлашки укçи юлсан
амăшне вăл тыттарать.

Пĕчĕк шăллĕ юнтарсан
ачашлать, лăплантарать.

Ч-40224
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Пӗчӗкрен ӗҫчен ӳссек
пулӗҫ ун тем чул туссем.

# Таврӑнатчӗ пирӗн ушкӑн...

Пӗтӗм класс хӗрсе кӑларчӗ
Ҫӗрулми тӑван ялта.
Хӑй кӑларчӗ, хӑй пуҫтарчӗ —
Ӗҫ пӗтерчӗ вӑл йӑлтах.

«Юратсах паян ӗҫлерӗм
Эп колхозӑн хирӗнче», —
Терӗм эп те, хӗпӗртерӗм
Туслӑ халӑх йышӗнче.

Таврӑнать халь пирӗн ушкӑн
Савӑк юрӑ юрласа.
Янӑрать сас уҫҫӑн-уҫҫӑн,
Уй юлать пек тӑнласа.

Чӑн та лайӑх. Лайӑх питӗ
Пулӑшсассӑн колхоза.
Вӑхӑт шӑвӗ, вӑхӑт иртӗ,
Пурпӗр юлмӗ манӑҫа

Ӑмӑртуллӑн, килӗшӳллӗн,
Тӑрӑшуллӑн ӗҫлени.

Ĕшенни-ырни те, шӳтлĕн
Калаçни, ĕмĕтленни...

Пурте юлĕç, тен, яланлăх.
Юлччăр, пулччăр-и асрах!
Ентĕ пур мĕн калаçмалăх,
Урамра та, çул çинче те
Хăть кампа та юлташла....
Тин кăна ял инçетреччĕ.
Ак çитетпĕр те яла.

Пахчасем çара, пушаннă,
Юлнă купăста кăна.
Ӳссе çитнĕ вăл, шуралнă,
Пит кĕресшĕн каткана.

Пĕтĕм çĕр, ытти хура та —
Кичемленнĕн туйăнать.
Ав, кĕтмен çĕртен куратăн:
Çĕрулми — мĕн кăларать
Халсăрланнă вата карчăк
Хуçăлса, сĕм-пĕчченех.
Чарăнатпăр кар! сасартăк,
Кăшт тăрсассăн класĕпех

Унăн пахчине кĕретпĕр
Хăвăрт эпĕр: «Кинемей»,

Хирĕç пулмăн-и эс, — тетпĕр,
Йышăнан-и ĕçлеме?»

Юнашаррăн, ак, тăратпăр
Кĕперех çак авăкра —
Икшер касă йышăнатпăр
Хăрнă, типнĕ авăра,
Ярт туртса, тăпăлтаратпăр,
Алăри кĕреçепе
Вылятса кăна пыратпăр.

Кăпăшка хура çĕрне
Çăмăллăн кăна чаватпăр.
Шултăра çĕрулмине
Тимлĕ пăрахса пыратпăр.

Шав шавлатпăр, шӳт тăватпăр,
Пикенсе ĕçле, ĕçле.
Сисейместпĕр те — тухатпăр
Кинемин ани вĕçне.

Хамăра туятпăр питĕ
Лайăх, лайăх халь. Сĕре
Савăкланчĕ кинеми те,
Тав тăвать чунтан пире:

— Ĕçĕм ку паян пĕтместчĕ
Ман...пĕччен...Сурать
чĕрем...
Хытă пулăшрăр. Кĕтменччĕ.
Спаçипах, ыр ачасем!

...Çак хитре ёçсем çинчен
илтрём пёр шкул ачинчен.
Кам вёсем çинчен илтмен.
Пёлчё ман йёркесенчен.

«Куç хărать те ал тăвать», —
Тенĕ халăх авалах.
Кам çакна асра тытать,
Ыр ят илтĕ яланах.

# Санюк

Çăнăх пек аллатчĕ хĕл
Шур юра, алипеле.
Çил-тăман вĕçтернĕрен
Çул та çукчĕ темелле.

Тĕттĕм уй, пуш-пушă уй
Хăрататчĕ çав тери.
Хулăн кĕрт хупланипе
Çухалатчĕ çул йĕрри.

Пурпĕрех эпир шкула
Çул тытаттăмăр хастар.
— Вĕренсен пулатăр çын! —
Тенине ăçтан манар?

Пурччĕ пирĕн ушкăнра
Уçă кăмăллă Санюк.

— Айтăр-ха маяк лартар, —
терĕ пĕринче тăрук.

Кĕç вара пасар пекех
Шав çĕкленчĕ таврара.
Лартрăмăр эпир маяк:
Çул хытти кирлех ара!

Ырă шухăш хĕпĕртет
Ырă ĕç тума пире.
Ав, пĕри кĕлте йăтса
Килнĕ анлă уй-хире.

Тепри çапă купине
Салатать хастарланса.
Çапăри туратсене
Юр çине чикме ансат.

Халь куçа хупсассăн та
Çухатмастпăр шкул çулне.
Савăнса ял-йыш мухтать
Ӳркенмен ачасене.

— Пултарулла та маттур
ĕçлеме пĕлетĕр-çке,—
теççĕ кӳршĕ-аршăсем, —
ăш сăмах та кирлĕ-çке!

2

Эс çырма-çатрасăр çул

ан шыра тара ўксе.
Хёл иртсен те сулнăксем
Такăнтарĕç, тусăмсем.

Пĕр çырма ял патĕнче
Тинкене илетчĕ шав.
Шăрăх кун типсе каять:
Сиксе каçĕ-ши юлхав?

Паттăр çын та каçаймасть
Çырма урлă ялт! сиксе.
Вăйлă çумăр çунă чух
Пăхăн вăрттăн шикленсе.

Хăрушла кĕрлетчĕ вăл
Çумăр шывĕ пулнăран.
Хывăнса каçаттăмăр
Унăн урлă пит аран.

Кĕр енне кайса хĕвел
Çунса пĕтнĕ кăвайтла.
Хĕрĕвне памастчĕ — çав —
Çу иртсен ялан çапла.

3

Пĕлĕтсен хура çуначĕ
Перĕнет пек çĕр питнех.
«Камăн пит сикес килет
Сив шыва?» — ыйтар тўрех.

Çак çырма тĕлне çитсен
Пĕринче Санюк пире

Пăхрĕ кăмăлсăр куçпа:
— Кам юсать ку çул-йĕре?

—Ма курмасть çакна ял-йыш.
Айтăр-ха çапла тăвар:
Çак хăруш çырма çинчен
Ял-йыша астутарар.

Аптратар килтисене
Çак çырма инкекĕпе.
Пухчăр ял-йышра пуху
Туччăр çакăнта кĕпер..

Çакăн хыççăн чăнласах
Шухăшсăр çын çӳремен.
Йышăнчĕ кĕпер тума
Ман ял-йыш тырпул кĕртсен.

Карлăклă хитре кĕпер
Икĕ чăнкă çыранпа
Сыпăнтарчĕ шкул çулне.
Аптрамастпăр çавăнпа.

Эх, епле Санюк матур!
Çивĕç ăслă вăл, вĕри.
Ăс пулсан хисеп те пур:
Çакă вăл кун-çул йĕрри!

x x x

Çĕмĕртсем шап-шурă
çеçкере ларнă пек

Эсӗ, пурнӑҫ, хӳхӗм-ҫке
сӗре, — терӗм эп.
Шӑпчӑк юрласассӑн пахчара
сан куллу
тем систерчӗ. Мӗн-ши
вӑл ара?! Тӗлпулу!
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхса иртет урамра
Ӑшӑ сӑмахна чӗрем кӗтет
Йӑлӑмра.
Юратусӑр пур-ши ҫич ютсен
тус-тӑван?
Ӗмӗр вӑрӑм пултӑрччӗ тесе
кӗл тӑвам.

x x x

Ҫурхи шывсем кӗрленӗ чух кӳлӗсемпе кӳлленчӗксем
Сӑн кӗртрӗҫ пирӗн ҫӗр питне. Вӗсем — ҫӗршыв
тӗкӗрӗсем

Тӗнче шавне хупла-хупла эс ҫитрӗн те юратупа,
Шутла-шутла пуҫ ҫаврӑнчӗ: эп юлтӑм тарӑн шухӑшпа.

Куҫран пӑхать ҫурхи хӗвел, куҫра — ман ӑшӑ шевлесем,
Юратупа, ҫухатупа ҫавах та сивӗнчӗҫ вӗсем.

Хӗвел тесе мана куҫран тинкертӗн эс чеен,
Ман ӑшӑ шевлесем вара ҫухалчӗҫ сан ҫинчен.

x x x

Тусăм! Эсĕ паянтан мана
Чунăм те!
Эп санпа çеç тупăп чăн-чăнах
ёмĕте.
Шухă çил ачи пек эс ыткăнса
пÿлĕме
кĕтĕн те, кайрăм çухалса:
«Мĕн чĕнес?»
Пĕтĕм хуйхă-суйхă тарчĕ пек:
Тавтапуç!
Çил ачи ма лартăр-ха тÿлек?!
Пуç ан ус!
«Эсĕ çил ачи-çке! — терĕм эп, —
Ан вăтан.
Шыраса эс туп-ха чĕреме
юратсан.
Тупрăн!
Тупрăн эсĕ чĕрене
паянтан.
Хытă ыратать вăл хăш чухне,
Эс çукран.
Юратма пĕлсессĕн чĕререн,
Савăн, кул.
Тĕнчене илем кÿме пĕрре
килтĕм пуль?!

x x x

«Ман юрату эс!» — çакнашкал хавас
Сăмах илтейменрен санра : час-час

Чуна ыраттаран сӑмахсене
Чулсем лекех пухатӑп хӑш чухне.
Эп ӑрӑмҫӑ пулаймӑп пурпӗрех,
Ман кӑкӑрти суранлӑ чун пӗрре.
Анчах чултан та йывӑр сӑмахпа
перейменӗн ҫынсене. Ку — ман шӑпа.
Хам ӑсӑмра хӗрарӑм тивӗҫне
Эп пурпӗрех ҫитересшӗн-ха вӗҫне.
Апла пулсан, Ҫӗн куншӑн савӑнам,
Чечек татса пуҫкӑшӑлӗ ҫыхам.
Ӑна парнелӗп хамӑн хӗрӗме —
упратӑр вӑл эп панӑ илеме.

x x x

Юрату хӑвачӗ мӗн тери вӗри!
Сан туту, сасартӑк, перӗнсен вара
Сисрӗм: юн вӗрерӗ!
Халь манран чӗрри
шыраса кам тупӗ хамӑр таврара.

x x x

Пӗрре килетпӗр тӗнчене, пӗрре!
Ҫӗр хут, пин хут каланӑ кун ҫинчен.
Мӗн-ма ҫакна манатпӑр, чӗмере?
Вӑрҫатпӑр, кӳлешетпӗр темӗнччен.
Пӗрне-пӗри савса та юратса,
юратура телейлӗ кун тупса
утасчӗ килӗшӳллӗ сӑмахпа
куласчӗ ҫӗкленӳллӗ сасӑпа.

# Прозăлла сăвă

«Сан куçусем цикори пек кăвак,
Сан куçусем цикори пек таса», — терĕн
Эс мана хĕрӳллĕн ыталаса.
«Цикори куç хупать хĕвел ансан, — эп
Каларăм сана ачашшăн пăшăлтатса. —
Пурнăç илемне туйса, юрлатăп
Ирлĕ-каçлă эпĕ, куç хупмасăр.
Ман пăхасчĕ сана яланах савса,
Цикори пек кăн-кăвак куçпа йăл-йăл кулса.
Чупту мана, чупту...
Ыталам та калаçам санпа
Вут кайăк евĕр çунса, çутă çиçĕм пек çиççе».

x x x

Çамрăклăх!
Манран эс çухалман иккен!
Çамрăклах!
Каллех эс таврăнтăн пулас!
Санпала каллех эп юрату тупса
аслă çут тĕнчешĕн
юрлама хавас.

# Çеçпĕл малашĕ

Вĕсем çитрĕçех! — Çеçпĕл кĕтнĕ
Çут ăслă чăваш ачисем.
Вĕсем пур чухне шанчăк пĕтмĕ,
Вĕсем — самана сассисем.

Айхи, Теветкел, Петĕр Эйзин
Тата Сементер те Айдаш
Халь пулчĕç ăста кĕнекеçĕ:
Вула та хак пар, тус-юлташ.

Энтип Ваççине те хаваслă
Куçпа вуласа киленсен,
Эп калăп тата çирĕп саслăн:
— Ан юлăр кун-çул уттинчен!

Ку — Çеçпĕл сăмахĕ!
Çапах та
Вăл пирĕн сăмах, тусăмсем,
Пире çĕклеҫ ӳллĕ вăй патăр
Çĕн шухăш тата чĕр сăнсем.

Усман-ха пуçне пирĕн халăх —
Пăхать çивĕч куçлăн мала.
Çынсен куçĕнчен чăр! пăхмалăх
Туптар-и эппин ăс-хала?!

«Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ачисем!» —
Тесе те калар пултарулăх
Çулне шыраса, тусăмсем.

Тĕнче илемне те туяр-и,
Тупар-и сăнарлă сăмах?
Ăсталăх вăл — шанчăк кăварĕ:
«Кам «Çук!» тет — ун чунĕ чăлах!

Ку — Çеçпĕл сăмахĕ!
Çапах та
Вăл пирĕн сăмах, тусăмсем,
Вăл ÿсĕм çулне хавхалаттăр,
Вăй илтĕр юратнă чĕлхем!

# Çурхи вăй

Шартлама хĕл иртрĕ,
Çитрĕ çуркунне.
Шыв-шуртан уй типрĕ,
тупрĕ хăй сăнне.

Симĕс пурçăн евĕр
хумханан калча
кăмăла сисмесĕр
Çупăрлать час-час.

Çамрăк сàвăç чунĕ
Çур чечекĕ пек.
Эп пăлханăп, çунăп, —
ма пулам, сивлек?

Ентешсем ĕçлеççĕ
уй-хирте, ялта.
Пурасем ӳсеççĕ
вăй-хăват пуртан.

Çĕн суртра çĕн мăшăр
Туйĕ сикессе
Калаçаççĕ ăшшăн
кӳршĕ-аршăсем.

Çĕнĕ юрă-çемĕ
тыткăнлать чуна.
Саламлатăп çĕнĕ
ĕмĕтлĕ куна.

Лидия Алексеевна Ковалюк
**ПРОБУЖДЕНИЕ**
(на чувашском языке)
Редактор: Н. Д. Ларионов.